Ч-209
„22" VIII 1941 г.
№ 159

К. СИМОНОВ

# ХЁРӐЛЛӖ КУНСЕМ

Кутепов полковникӑн полкӗ темиҫе кун хушши ӗнтӗ Д. хулана сыхласа тӑрать.

— Снарядсемпе патронсем пирӗн ҫителӗклӗ, каялла чакма вара эпир пурпӗр хатӗрленместпӗр,—тет Кутепов юлташ.

Кунти боецсем, вӗлерсен те — каялла чакас ҫук. Ку ӗнтӗ полк вырнаҫнӑ вырӑна пырса кӗрсенех сисӗнет.

Хулара ҫирӗп йӗрке, ҫыхӑнӑва лайӑх йӗркеленӗ. Позицисене тӗплӗ ҫирӗплетнӗ.

Кунта паттӑр кӑна мар, тата питӗ ӑста ҫапӑҫаҫҫӗ Полк ҫӗр айне пытаннӑ. Нимӗҫсен авиацийӗ, артиллерийӗ, танкӗсем ӑна ҫӗр айӗнчен чаваласа кӑларма пӑхнӑ, анчах та вӗсен ӗҫӗ ҫиле ҫеҫ кайнӑ. Тарӑн окопсене ҫирӗп блиндажсемпе хӳтӗленӗ, хулӑм ҫивиттисемпе витнӗ. Наблюдательнӑй пунктсене лайӑх йӗркеленӗ. Ҫӗре чавса темиҫе километр тӑршшӗ тунӑ вӑрттӑн ҫулсем вӗҫӗмренех ҫыхӑну тытса тӑма май параҫҫӗ. Полк тӑшмана пысӑк тӑкак туса, нимӗҫсен атакине пӗрин хыҫҫӑн тепӗрне аркатса пырать.

...Çĕрле разведка нимĕçсем вăрмана, эпир малтанах тупăсенчен персе тĕллесе хунă икĕ пункта, пире хирĕç атакăна тухма танксем пухни çинчен пĕлтерчĕ.

Артиллери начальникĕ полковник Мазалов çак пунктсем çине тупăсенчен пеме приказ пачĕ.

Гаубицăсен батарейисем виççĕн тан пĕр харăсах пеме тытăнчĕç. Снарядсем пурте вăрманти лапамсенче, çав тăшман танкĕсем тăракан çĕрте çурăлаççĕ. Снаряд хыççăн снаряд çурăлнипе пĕтĕм таврaлăх кĕмсĕртетсе тăрать.

Тепĕр вунпилĕк минутăран таврaлăх лăпланать. Разведка тăшмансен сакăр танкне пĕтерни çинчен пĕлтерчĕ. Ыттисем, васкасах вырăнтан тапраннă та, малалла, вăрман хĕрринелле тухаççĕ.

3 сехет те 30 минутăра нимĕçсен çитмĕл танкĕ вăрман хĕррине тухса тупăсемпе пулеметсенчен çунтарма пуçларĕç.

Пирĕн противотанковăй тупăсем халь пемеççĕ-ха, вĕсем хăйсен позицийĕсене палăртасшăн мар. Анчах пулăшакан артиллери çийĕнчех нимĕçсене хирĕç пеме пуçларĕ.

Татах темиçе танка çухатнă хыççăн, нимĕçсен атакăна вăхăтсăрах, ăна хăйсен вучĕпе хатĕрлесе çитеричченех, пуçласа ямалла пулчĕ. Вĕсем фронт тăрăх сарăлчĕç те тĕллесе туса тăмасăрах пеме пуçларĕç.

Халĕ ĕнтĕ вĕсен çулне противотанковăй канав пӳлсе тăрать. Канава тавраран çаврăнса каçнă май, танксен пĕр çĕре пухăннă ушкăнĕ минăсем лартса тухнă вырăна пырса кĕчĕ. Темиçе секунда хушшинчех çичĕ танк арканса кайрĕ. Фашистсен танкистчĕ-

сем люксенчен мĕнле сике-сике тухни, хăйсен машинисемпе юнашарах мĕнле тĕршĕне-тĕршĕне анни окопсенчен лайăх курăнать.

Ытти танксем противотанковăй канава тавраран çавăрăнса каçса, пирĕн оборонăн малти хĕрри умне пырса тухрĕç. Çакăнпа пĕр вăхăтрах, халь ĕнтĕ çĕнтертĕмĕр тесе пулас, шоссе çине нимĕçсен штаб машинипе темиçе грузовик сиксе тухрĕç. Грузовиксем çинче салтаксем.

Сулахай флангри рота, хăйĕн командирĕ Хорошев лейтенант хушнипе, вĕсем çине пулеметсенчен икĕ енчен те пеме пуçларĕ. Тепĕр минута çурăран вăрман хĕрри пĕтĕмпех нимĕç салтакĕсен виллисемпе хупланчĕ. Штаб машини çинчисем вырăнĕсенчен тапранаймасăрах вилсе кайнă.

Вăрмантан, психикăлла атака тăвас шутпа пулас, стройпа тухнă нимĕçсен икĕ полкĕн кунçулĕ те çакăн пекех ăнăçсăр та кĕске пулчĕ.

Вăрман çывăхра пулни çеç колоннăн пĕр пайне çăлса хăварчĕ. Унăн çуррине ытла пирĕн пулеметсен вучĕ çулса пăрахрĕ.

Анчах танксем çак вăхăтра шунăçемĕн малалла шăваççĕ. Хăшпĕр танксем шоссе çине тухма та ĕлкĕрчĕç. Çакна асăрхасан, Хорошев лейтенант, Громов связист урлă, саперсене малтанах минăсем лартса хатĕрленĕ кĕпере сиктерсе яма приказ пачĕ.

Акă, пĕрремĕш танкĕ кĕпер урлă каçрĕ. Татах темиçе секунда иртрĕ, вара... Шăпах ĕнтĕ саперсем çак темиçе секундăна нимĕçсене памарĕç. Пĕрремĕш танка ирттерсе ярсан, вĕсем ытти танксен сăмси умĕнчех кĕпере сиктерсе аркатрĕç.

Возгрин лейтенантăн çул хĕрринче тăракан батарейи чарăнса тăнă танксем çине тӳрĕ тĕллесе пеме пуçларĕ. Пĕр самант хушшинчех вăл виçĕ танка аркатрĕ те, вара кĕпер урлă каçма ĕлкĕрнĕ йывăр танка тата çывăхрах ярса, унăн гусеницине персе салатса пăрахрĕ.

Танк чарăнчĕ, анчах çапах та пеме пăрахмарĕ. Вара Тарасевич сержант ун çумне çывăхах пычĕ те, унăн хĕрсе кайнă выхлопной труби çине бензин тултарнă бутылка ывăтрĕ. Танк çунма пуçларĕ. Унăн экипажĕ тухса тарма тытăнчĕ. Тарасевич пĕр фашистне наганран персе ӳкерчĕ, ыттисене гранатăпа пĕтерсе хучĕ.

Нимĕçсен вăрмантан тухма хатĕрленсе тăнă пехоти, мăкăрланса çунакан танксене курса, вăрман хĕрринче пытанса выртрĕ.

Анчах центрти танксем çаплах малалла шăваççĕ-ха. Вĕсем противотанковăй канава минăсем лартнă вырăнсенчен тавралла иртсе, пирĕн пехотăран 300—400 метр çеç аяккарах килсе тухрĕç.

Танксем пехота тиенĕ броньăланă площадкăсене туртса пыраççĕ. Пехотăн пĕр пайĕ танксем çинче, танксен бронин хӳттинче, ларса пырать.

Танксене пит çывăха ярса, вĕсем çине пирĕн противотанковăй тупăсенчен пеме пуçларĕç.

Акă, пĕр танка, тепĕр танка, виççĕмĕшне, тăваттăмĕшне... персе аркатрĕç.

Халĕ ĕнтĕ гаубицăсенчен машинăсем çине пемеççĕ. Пирĕннисем хăйсен вутне малалла, вăрман хĕррине куçарса, пехотăна танксенчен уйăрчĕç.

Нимĕçсен резерв текех килсе тăма пултараймасть.

Халь ĕнтĕ мĕнпурĕ те малалла иртсе кайнă танксемпе пехотăна çеç пĕтермелле.

Противотанковăй тупăсем вунă танка яхăн персе ӳкерчĕç, анчах тупăсем хăйсем те нумайĕшĕ стройран тухрĕç.

Нимĕçсен персе ӳкереймен танкĕсем пирĕн окопсен малти линийĕ урлă каçаççĕ. Боецсем нимĕн хăрамасăрах окопсенчен сиксе тухаççĕ те мала иртнĕ танксем çине бензин тултарнă бутылкăсем ывăтаççĕ.

Тĕлех ывăтайман пĕр бутылки танк çинчен кусса анчĕ. Нимĕç офицерĕ çӳлти люка уçрĕ те, ун çине йĕрĕнчĕклĕн пăхса илсе, уссине пĕтĕрчĕ.

Çакăн пек хăлаçланкаланине Хорошев лейтенант, хăйĕн командăнăй пунктĕнче снайпер винтовкипе лараканскер, питĕ лайăх курчĕ.

Пăшал сасси.

Люк хупăнма та ĕлкĕреймерĕ, нимĕç мĕнпур кĕлеткипе тулалла тухса ӳкрĕ.

Башньăри стрелок, ăна каялла сĕтĕрсе кĕрес шутпа, çĕкленчĕ, анчах ăна та Сербиенко снайперăн пульли пырса тиврĕ.

Танксем сахалланнăçемĕн сахалланса пыраççĕ. Халĕ вĕсем пĕтĕмпех пирĕн çар вырнаçнă вырăнта. Нимĕç салтакĕсем пирĕн окопсем çине гранатăсем ывăтса, броньăланă площадкăсемпе танксем çинчен сике-сике анаççĕ.

Батальон командирĕ капитан Гаврюшин хăйĕн шала вырнаçтарнă противотанковăй туппиcемпе пулемечĕсенчен пеме приказ пачĕ.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн пехота контратакăна тухса ыткăнчĕ.

Вут вăйне чăтаймасăр тата пирĕн штыксенчен сехĕрленсе, нимĕç пехоти нимĕн йĕркисĕр каялла чакма тытăнчĕ. Татах тепĕр виçĕ танк çунма пуçларĕ. Нимĕçсен тĕрĕс-тĕкел тăрса юлнă танкĕсем те, хăйсен таракан пехотине вутпа хӳтĕлесе, чакма тытăнчĕç.

Нимĕçсем пăшалĕсене пăраха-пăраха хăварса, пакунĕсене тата-тата пăрахса, çӳллĕ ыраш пуссипе тараççĕ.

Вăрман хĕрринче вĕсене пирĕн гаубицăсен вучĕ кĕтсе илет.

Пирĕн часть вырнаçнă çĕрте пĕртен-пĕр танк çеç юлчĕ. Вăл, гусеници арканчăк пирки вырăнтан тапранаймансĕр, Хорошев лейтенантпа Гаврюшин капитан ларакан командный пунктран хĕрĕх метр çеç аякра тăрса, блиндаж çине перет. Анчах та, снарядсем хӳтлĕхĕн метр çурă хулăнăшне çеç шăтарса кĕреççĕ, тата çур метрне шăтарса тухма вĕсен вăйĕ çитеймест. Çывăхах илсе пынă противотанковăй тупă виçĕ снарядпа персех çак танка та аркатса тăкрĕ.

Вунтăват сехет хушши тăсăлнă çапăçу лăплана пуçларĕ. Анчах пирĕн гаубицăсем çапах та вăрман çине переççĕ-ха,—каялла чакакан нимĕç машинисем çав тĕлтен иртсе каймалла.

Полкăн наблюдательнăй пунктĕнчен мĕнпур çапăçу хирĕ лайăх курăнать. Ыраш ăшĕнче нимĕç салтакĕсен виллисем ушкăнĕ-ушкăнĕпе выртаççĕ. Ăçта пăх унта—танк çĕмрĕкĕсем.

Красноармеецсем нимĕçсем ыраш ăшне пăрахса хăварнă тимĕр хĕрессемпе медальсем пухса килеççĕ. Разведчиксем штаб патне нимĕçсенчен туртса илнĕ

мотоциклсемпе самокатсем илсе пыраççĕ. Трофейсен купи ӳснĕçемĕн ӳссе пырать.

Полковник Кутепов, батальон комиссарĕ Зобкин, штаб начальникĕ капитан Плотников иртнĕ кунăн итогне тăваççĕ: тăшмансен 39 танкне çĕмĕрнĕ, икĕ ротăна яхăн пехота, икĕ грузовик, штаб машинине пĕтернĕ. Кунĕ хĕрӳллĕ пулчĕ, анчах ку кунăн результачĕсем те лайăх пулчĕç.

*Действующи çар.*



Цена 5 коп.

15

*К. Симонов — ГОРЯЧИЕ ДНИ*
*Государственное издательство Чувашской АССР — 1941*

Редактор перевода *Г. И. Краснов*

Подписано к печати 8-VIII—41 г. НТ 5723. Объем 0,25 п. л.
Тираж 4000 экз. Заказ № 402.

Гор. Чебоксары, тип. № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР.